

Юрий Сементер поэт пирĕн хаçатпа тачă çыхăну тытать, унăн чăвашла кăларăмĕнсене хатĕрленĕ çĕре яланах хутшăнать.

Поэт **1941** çулта Красноармейски районĕнчи Танăш ялĕнче çуралнă. Çарта пулнă, Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă, **1974** çултанпа – "Ялав" журналăн тĕп редакторĕнче ĕçлет.

Тăван литературăри çитĕнÿсемшĕн Юрий Сементере кăçал Чăваш халăх поэчĕн хисеплĕ ятне панă. Çавна май паян эпир унăн сăввисен ярăмне пичетлетпĕр.

## ЧĂВАШ ÇĔР–ШЫВĔ

Хĕвел тĕррилле эс, Чăваш çĕр-шывĕ,
Сана пил панă аслă Асатте.
Маттур хĕрĕ-ывăл çĕнĕ юрă хывĕ,
Куллен хушса хевте çумне хевте.

Сим пыл чĕлхилле эс, Чăваш çĕр-шывĕ,
Эс илнĕ Улăп амăш халалне.
Çав халалпа эс ĕмĕр-ĕмĕр сывă,
Уçса пыран пуласлăх алăкне.

Патвар çунатлă эс, Чăваш çĕр-шывĕ,
Сассу çĕкленчĕ çăлтăрсем патне.
Кĕтрет çутин çул тупери вĕçевĕ
Савса çырать чăваш ачин ятне.

Телей шевлипле эс, Чăваш çĕр-шывĕ,
Çут тĕнчери пин халăх йышĕнче.
Ярăмланса янрать асамлă кĕвĕ
Малашлăх карнă хĕлĕх хĕмĕнче.

* * *

Эп – вата драмăçă. Çĕр чăмăрĕ – ман сцена –
Тек çаврăнать хăй тĕнĕлĕ тавра.
Гомер, Эсхил, Шекспир та Авиценна
Çамкисене пĕреççĕ пек умра.

Эп çирĕм ĕмĕр шайĕпе пăхатăп
Тĕнче сценин пулăмĕсем çине,
Этемлĕх ăсĕпе виçсе хаклатăп
Ырăпала усал хирĕçĕвне.

Пехиллĕ шухăш ыравне эп хапăл, –
Çав шыравпа вăл çĕн малаш уçать.
Анчах кам калĕ: çиçĕмле ăс-хакăл
Мĕн-ма ялан ик йĕрпеле куçать?

Ырри мала ÿксесĕн виçĕ утăм
Усалĕ тăваттах ярса пусать,
Е çĕнĕ пайăрка çутсассăн çутă
Сĕм каç килсе ун шевлине пăсать?

Хĕвел те уйăх – икĕ тĕслĕ рампа
Çак сцена çаврăмне тишкернĕçем –
Паян-и, ырă тусăм, е ыран пăх –
Ялан куратăн çĕн тÿнтерлĕхсем.

Ачаш çеçкеллĕ мăкăнь... Кам шутлатăр
Унра хаяр хăват ларать тесе?
Е хамăра шур пир пилленĕ кантăр –
Кам пĕлтĕр вăл çынна минрет тессе?

Ыраш тĕшшипеле пĕрле нейтрон та
Выртать çĕршыв-аннемĕр варĕнче,
Хăрушă ылханпа çеп-çепĕç ода
Писеççĕ пĕр поэт кăварĕнчех.

Çĕн гений амăш кăкăрне ĕмет-и,
Шуйттан халех тĕпчет-и ун çулне, –
Çĕр çаврăнать. Пырать трагикомеди.
Кашни вылять шăпа пÿрен рольне.

* * *

## КАМСЕМ ЭПИР ?

*Элли Юрьева*

Çут çăлтăр витĕр çул курнать тесе
Утас çула çул тупере суйлатпăр.
Суйлатпăр та, туссем-тăванăмсем,
Каллех пĕрне-пĕри куçран пăхатпăр.
Камсем эпир, камсем,
Ăçта каятпăр?
Камсем эпир, камсем,
Мĕскер шыратпăр?

Асаттесен йĕрри пурах тесе
Хыçри куна сĕвемлеме пуçлатпăр.
Пуçлатпăр та, туссем-тăванăмсем,
Каллех çип çыхланнишĕн тарăхатпăр.
Камсем эпир, камсем,
Ăçта каятпăр?
Камсем эпир, камсем,
Мĕскер шыратпăр?

Çул сылтăм енĕ сулнăклă тесе
Тилхепене сулахая тытатпăр.
Тытатпăр та, туссем-тăванăмсем,
Каллех çĕн сулнăкра куçа уçатпăр.
Камсем эпир, камсем,
Ăçта каятпăр?
Камсем эпир, камсем,
Мĕскер тăватпăр?

* * *

Писĕ çĕмĕрт касрăм, ухă аврăм,
Кĕр çиппинчен хирлÿ канри яврăм.

Йĕппине вучах чăртсе туптарăм,
Чĕререн хĕм кăларса хăйрарăм.

Ĕç пĕтсессĕн хытă хаваслантăм,
Çумăмра вылярĕ ик çунатăм.

Тимĕк кăвар утăма утлантăм,
Ял вĕçĕнчи ту çине хăпартăм.

Ши! çеç кайрă манăн вичкĕн сăннăм,
Каялла анмарĕ çилхăванăм.

Мĕн çухатрăм, тетĕп, ÿкĕнетĕп,
Яшлăха иккен ăсатса эпĕ.

* * *

Ай-хай сăпка сикет, ярăнать,
Сăпка тавра тĕнче çаврăнать.
Пай-пай, пайăшки,
Пилеш йывăç пĕкечи,
Уртăш йывăç сиктĕрми...

Ай-хай, Турикасра туй шавлать,
Шилĕк тавра тĕнче çаврăнать.
Пай-пай, пайăшки,
Пилеш йывăç пĕкечи,
Уртăш йывăç сиктĕрми...

Ай-хай, тупăк анать, çĕр хăпарать,
Тăпра тавра тĕнче çаврăнать.
Пай-пай, пайăшки,
Пилеш йывăç пĕкечи,